## ИОСИФ ДМИТРИЕВ



# ХӲККӲҪӖМ, ПӖЧӖКҪӖ ХӲККӲ

**Сăвăсем**

## АТАШНĂ ЧУН

Эс ӳссе çитнине никамах та курмарĕ,
Ар пĕвне кĕнине никамах та туймарĕ.
Чупкалать ман тавра çăмăл çил ачисем,
Хумхатать пахчара мăкăньсем-чечексем.
Ăмсанман мăкăне,
Кĕвĕçмен чечекне.
Эпĕ мĕн? Курăк çеç,
Курăксем йăлтăри çутăпа
Çиçкĕнмеç.
Анчах темшĕн мана та çупăрлать çил ачи,
Вăл кулать-и, савать-и? — Хĕвĕмре хыпашлать.
Кам пĕлет — çав калатăр...
Çутăлать.

* * *

Çӳрес текенсене çул парăр,
Каяс текенсене ан чарăр,
Канас текенсене кантарăр,
Мана хампа пĕччен хăварăр.
Тĕрĕс сăмахăр кирлĕ мар,
Аш питлĕ куллăр кирлĕ мар,
Ачашлани те кирлĕ мар.
Мана хампа пĕччен хăварăр.
Савмалăх çуккине савмашкăн,
Сумалăх çуккине сума сумашкăн,
Нĕрсĕрлĕхе чыса хумашкăн —
Тек халăм çук! Мана пĕччен хăварăр!
Асаттесен çулне тупам та,
Ем-ешĕл курăк витĕнем те
Калам Сире çĕр айĕнчен:
— Килен-каян, яту — Ят пултăр!
Иртен-çӳрен, сăну — Сăн пултăр!
Выртан-тăран, ĕçӳ — Ĕç пултăр!
Мана хампа пĕччен хăварăр!

* * *

Йӳçкасси йăмрисем,
Кашламас çăлĕсем,

Ман ятпа та çурта
Çутас вăхăт çитсен,
Килĕр-и ман пата
Юлашки çулăма кăтартма?

* * *

Çилсем, çилсем килеççĕ
Çурçĕр енчен те кăнтăртан,
Çилсем, çилсем вĕреççĕ
Анăç енчен те тухăçран.
Хура çилсем — кăра,
Сарри — ултавлă,
Шурри — кĕтмен шара,
Хĕрли — хĕрхӳллĕ.
Вĕрсе — чуна çурса — кĕреççĕ
Ырлăха мар — пĕр хурлăха,
Ачашласа тĕпрен кăклаççĕ
Уй варринчи хурамана.

## ЮМАХ

Çĕрсем çийĕн, Çĕр тавра
Кăра çилсем кĕрлеççĕ.
Кăра çилсем хушшипе
Сан ачусем çӳреççĕ.

Сан ачусем çӳреççĕ,
Ахлатаççĕ, хӳхлеççĕ,
Хаяр çилсен ахравĕнче
Кунсем, çĕрсем çĕтеççĕ.

Ахрат çырми хĕрри чăнкă,
Тăван çĕре çитесчĕ,

Çырма урлă тăван аннен
Таса пилне илесчĕ.

«Анне, анне, кала-ха,
Сан çырану лăпкă-и?
Килĕмĕрĕн вучахĕ
Халь те пулин çунать-и?»

Хура чĕкеç пулса, анне
Аллăм çине ларайрĕ,
Йӳçкассисен ыр сассипе
Мана çапла каларĕ:

«Кăра çилсем вĕреç пулсан,
Ырă Турă писмен-ха,
Кил вучахĕ асра пулсан,
Чунна ийĕе çимен-ха.

Пире, кĕçĕн ывăлăм,
Турă пĕрле çӳреттĕр,
Пире тивнĕ йывăрсене
Пĕр чăн Турă çĕклетĕр.

Чипер çӳре, сывă пул,
Сывă пул та сăпай пул.
Хаярсенчен ан шиклен,
Ийĕе умне ан куклен».

...Шурăмпуçĕ шуралчĕ,
Чĕкеç çунат сулайрĕ.
Пĕччен тăрса юлтăм эп,
Хĕвел умне тăтăм эп.

* * *

Эс мана пит ҫиллентĕн пулсан,
Тăхтасамччĕ, савни, кăшт тăхта,
Ик куҫа хаяр вут ҫутатсан,
Сăмаха вĕҫертме ан васка.

Хаяр вут, синкер вут пирĕнте
Кашнинчех тапранма пултарать,
Сив сăмах амантса, вĕлерсе,
Чĕрене шар ҫурса хăварать.

Ăс-пуҫа та чуна тап-таса
Упрама яланах ҫăмăл мар.
Ҫав-ҫавах пĕр-пĕрне юнаса,
Тĕнчене усалпа хуплас мар.

Ҫилĕпе ырă ĕҫ пуҫланман,
Синкер ҫил армана ыр туман.
Ырă ҫил ун чулне ҫавăрать,
Ыр сăмах ҫылăхран та пăрать.

* * *

Сив ҫырма,
Шур хуран...
Тăван ҫĕр хуралĕ —
Сăртра турат сарнă вată хурама.
Сивĕ ҫил килет те,
Ҫулҫисем ӳкеҫҫĕ,
Сивĕ ҫил килет те,
Пăрланать ҫырма.
Хурама хăюллăн
Тĕтрене сирет те
Туратне сарать вăл
Хĕвеле ларма.
Ҫавăнпа хĕвеллĕ

Сив çырма çĕршывĕ,
Çавăнпа хĕвеллĕ
Хурăнлăх каçпа.
Пепкесен çутишĕн,
Ваттисен ăшшишĕн
Сăртра турат сарнă ватă хурама.

## КУН КУРКИ

Турă панă кунсен пылакне-йӳççине,
Пӳлĕх пӳрнĕ каçсен асапне-ачашне
Тĕппипе ĕçмелле.
Тĕттĕмпе витĕнсе
Ыйхунта
Сарă кун тĕнчине çитиччен,
Шур лаша çилхине тытиччен.
Çамрăк чун кăмăлне кун çитмест,
Çавăнпа Шур лаша çилхине çатăрлать вăл.
Кун курки тĕпĕнче чăнлăх пур,
Каç курки тĕпĕнче сумлăх пур.
Тĕппипе — йӳççине!
Тĕппипе — асапне!
Татса ывăт Шурă Ут тăллине!

1978 ç., авăнăн 14-мĕшĕ

## МĂШ ПУРНАÇ

Мăш та ан ту, пăш та ан ту,
Ан калаç,
Ан илт,
Ан кур!
Эс чĕлхесĕр,
Эс хăлхасăр,

Эс чĕресĕр те ӳпкесĕр,
Эс ухмах! Ҫакна манмасăр
Пурăн!
Чĕлхӳне татаҫҫĕ — эсĕ мăш! кăна,
Тăванна таптаҫҫĕ — эсĕ пăш! кăна.
Аслисен ҫӳл тĕнчинче ларатăн.
Ырлăхсен ятне мухтав юрлатăн.
Аялтисене хăвартăн мăшкăла,
Хăвăн халăхна пусартăн пушăпа.

* * *

Таса уйра виҫ хурама —
Таптаса каякан ҫилсене пуҫҫапмасăр,
Хĕрхенӳсĕр хĕвел хĕртнине парăнмасăр,
Вилĕмпе ҫӳрекен ҫумăра пăхăнмасăр
Лараҫҫĕ.
Пĕрине тепринчен уйăрса каясран хăраса,
Тайăлан юлташа ӳкесрен, вилесрен хăтарса,
Кунĕпе-ҫĕрĕпе чĕптĕм куҫ хупаймасăр
Упраҫҫĕ.

* * *

Вĕсем хушшинче ҫамрăкки — Турă пани — виҫ ҫулта.
Ҫамрăк-ха...
Вăхăт ҫитĕ. Виҫ хурама
Ҫĕре кукленсе чăн чăваш тĕнĕпе пурăнан ваттисем пек
Калĕҫ:

Ылттăн Хĕвел,
Ылттăн Уйăх,
Ылттăн Ҫăлтăр,
Тав сире пире упранăшăн, сыхланăшăн,
Усал-тĕселтен сирнĕшĕн.
Упрар-сыхлăр пирĕн тăхăма.
Сире пехил.
Эпир каятпăр.

* * *

Хĕвел.
Хĕвеллĕ ир.
Хĕвеллĕ хирте ешĕл куракă.
Ешĕл куракă çинче,
Такам лартнă хурама айĕнче
Хам çинчен виçĕ тĕлĕк куртăм:

* * *

Çухаличчен, çук пуличчен,
Тĕнче пире тĕп тăвиччен
Чун тĕпĕнче выртни-тăни,
Чĕлхе вĕçне килсе çитни,
Тӳсни-чăтни, мăшкăл курни,
Шăла çыртса çакна тӳсни.
Хĕвел те Уйăх, Çăлтăра
Ӳпке вăйпе кĕлĕ туни
Манран сана,
Манран сана,
Тата чăтма, тата тӳсме,
Çук тенĕ чух та çĕнтерме —
Хура чан сассине сирсе
Чăваш ятне хĕвеллеме.

* * *

Каяс тухса ăçта та пулин,
Аçта та пулин, кампа та пулин,
Кампа та пулин, кам патне те пулин.
Кам патне те пулин, анчах çакăнтан,
Çакăнтан, юратăва та туслăха ахăрашса аркатн

Хутлăхран,
Ахăрашса аркатнă хутлăхран, хĕвел те уйăх, çăлтăр
Çутине
Чарса тăран вăйсен витĕнчĕкне
Сирсе
Тухса каям
Аçталла та пулин.
Каяр тухса ăçталла та пулин.
Кăнтăрсен-çурçĕрсен çилĕпе çăвăнса тăсалар,
Анăçсен-тухăçсен вăй вылян сассипе савăнар,
Юратма тĕппипех маниччен,
Чĕресем чулланса лариччен,
Урасем хускалми пуличчен,
Чĕлхесем çаврăнми пуличчен
Тухса каяр ăçталла та пулин.

* * *

Чĕкеç чĕлхиллĕ пулаймарăм,
Чуна уçса, сас кăлармарăм.
Кунтан тухса, кунтан кайсассăн
Телейлĕ пул...
Телейлĕ пул ырлăх курмашкăн,
Ырлăх çитсен, савни тупмашкăн,
Савни тупсан, хунав хушмашкăн
Телейлĕ пул.
Хаяр ӳксен чĕррĕн юлма,
Хĕвелпеле пĕрле тăма,
Çăлтăрупа çулна тупма
Телейлĕ пул.

Таçта çитсе темскер курсан та,
Инкек çине синкек тухсан та,

Эп кунтине манса кайсан та
Телейлĕ пул.

Ĕçес шыву сăваплă пултăр,
Çиес çăкру сăваплă пултăр,
Тăвас ĕçÿ вырăнлă пултăр,
Телейлĕ пул.

Яту сан ĕмĕре çуталтăр,
Ачу-пăчу тăпра шăвартăр,
Йывăррине Турă çĕклетĕр,
Телейлĕ пул!
Сăваплă пул!

* * *

Пуç миминчен сăхса,
Тумламăн юн сарăхтарса,
Сехет шаккать.
Сив хĕл килессине сиссе,
Ўт-пÿ шăнать.

* * *

Мĕне кĕтетĕн эс?
Кама кĕтетĕн?
Çурхи шывсен кĕрлевĕ хускалсассăн,
Суя чансен сасси кăшт лăплансассăн
Килет-и Вăл, сан Хĕвелÿ,
Чĕрлет-и хĕл хĕненĕ кĕлеткÿ
Хăмăш тĕпне капланнă шыв чаксассăн,
Кайăк пулса Калăм çунат хушсассăн?
Хĕвел килсен,
Вăхăт çитсен,
Арман чулĕ айне пулса, усал лăпланĕ,

Ултав кусне те йеп чиксе шатаре.
Анчах эс путан емер шурлахра,
Усал есу сана секленме паме,
Сан ятупа сутна сурта сутатме.
Кама кететен эс?
Мене кететен?

* * *

Кететеп саланас.
Кететеп салапасултавпа тулна хутлахра.
Кететеп салапас
Вилемпе машкал пуспулса тана тарахра.
Чан сассипе килне Вилем
Чан сапакан майне паяв явре.
Чан самахепе килне Машкал
Иксер султан касхи пашал сассипе
Янараре.
Касхи пашал сассипе Хевел суккарланче.
Суккар Хевел айенче,
Вилемпе Машкал хушшинче
Куракран, йывасран ватанса,
Асатте-асаннене манса,
Хамартан хамар намасланса,
Хамара хамар хур туса,
Сутса,
Сунса кайна емерсен ятне-шывне,
Сунса кайна пуранас емелкине
Телекре те пулин асилме хараса
Суретпер.
Шал сыртса сапасна, чан сассине хирес тана
Асаттесем асран тухна.
Чан сасси хуплана Хевел айенче,
Сылахпа тулна хутлах лаппинче
Сылах касарттаракан Эсрелпе вылять.

* * *

И Ҫӳл Тӗнче!
Сан ҫарану ҫине ура ярса пусма
Эп тивӗҫлӗ тесе,
Ҫам хӑйӗ калама?

## ПУШЛАХРА

Ах, Шупашкарӑм, савнӑ Шупашкарӑм!
Ӗмӗтӗмре ҫеҫ мар-ҫке — пурнӑҫра
Сана куратӑп, сассуна танлатӑп,
Анчах та темшӗн лӑпкӑ мар чунра...
Ҫӳретӗп аслӑ, ҫутӑ урамра
Ӗмӗлкесем ташлани вӑхӑтра.

Черченкӗ сӑва хайласа ӗшеннӗ
Поэт пекех фонтанӗ. Шӑп ларать.
Ҫул урлӑ — Ленин. Кунӗпех ӗҫленӗ
Ҫын хушшине канма-курма тухать.
Пединститут хӑй ҫутине сӳнтернӗ.
Чун кӗнӗ площадьри яш-кӗрӗме.

Ҫаҫхи сӑнсем-ютсем. Ҫӑвар вылявӗ!
Ман ӗмӗлкем машин айне пулать.
Пуҫран ҫапать сукӑр ҫӑка турачӗ,
Ура шӑвать. Ҫӗрхи хула асфальчӗ
Пӗр йӗлпӗрет, пӗр тип куҫпа пӑхать.
Ҫаҫхи хунар ҫути хуплу хывать.

## ЧӐВАШЪЕН

I

Ҫухалчӗ уйӑх, пӗлӗт халаҫланчӗ,
Умри йӑмралӑх
Чулланса шӑпланчӗ.

II

Тинĕсри хумсем-ши çырмисем?
Макăран чулсем-ши йăмрисем?

Хумĕсем хускалмаççĕ.
Чулĕсем сас памаççĕ.
Çырмари çăлĕсен
Куçĕсем пăрланаççĕ.

III

Емĕрĕмĕр каçпа кун хушшинче:
Тĕлленнисем кун çутинче ирлеççĕ,
Пурăннисем каç хуринче çĕтеççĕ.

IV

Тараççĕ пахчаран саркайăксем,
Кунта ним ĕç те çук пулас вĕсен.
Каяççĕ харама ыр ĕмĕтсем,
Хăватсăр пулчĕç-тăр яш ĕмĕр аллисем.

V

Нимрен те ан хăра,
Çутă шыранă чух эпĕ санпа.
Ишĕлнĕ шанчăк куписене сире-сире
Шупашкарсем те çĕрпӳсем ĕçленĕ чух
Эп вĕсемпе.
Шыра. Çутă шыракан тупать.
Ишĕлчĕк айĕнчен тухнисем
Хĕвеле пӳрнепе тĕллемеççĕ.

VI

Суккăрланса юлсан,
Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту çути юлĕ.
Чĕлхесĕре тухсан,
Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту ахлатăвĕнче сассăм пулĕ

Пурнăçăма туртса илсен,
Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту манăн юпа пулĕ.
Асапăма йатĕ.

VII

Тунсăх — ман пурлăхăм,
Савнăç — сайра килекен сар хăна.
Эпир çеç пĕр вĕçсĕр пĕрле, Хĕрлĕ Тăвăм,
Ĕмĕр чĕрĕ юлмалăх ыратăвăм.
Эс сас пани — чĕре уçланкинчи
Чи тарăн йĕр, чи çӳллĕ йывăç,
Чи йӳçĕ çимĕç.
Эпир тӳснĕ те чăтнă,
Тӳсмелли-чăтмалли тата пулĕ.
Пирĕн иртнĕ хура кунсене
Кайăксем тинĕсе кайса пăрахаççĕ,
«Майĕ çинçе хĕлĕх пек...»
Вĕсем çĕклейменни пуçăм çине ӳкет.
Юлашки кун çути йăлтлатса сӳниччен
Эпĕ пулăп санпа, Хĕрлĕ Тăвăм.

VIII

Пур пирĕн халăхра аваллăх тымарри,
Тен, çавăнпа юнра малашлăхсен юрри?
Пур пирĕн чĕрере сипленейми суран,
Тен, çавăнпа тĕнче кĕрлет ăшра ялан?
Аттесĕр юлнисем пур пирĕн ăрура,
Тен, çавăнпа вĕсем паян та хуралта?

IX

Эй, ыр ял-йыш та хула-йыш!
Ыр тăвансем те тусăмсем!
Сире юрас тесе, сăмахăм варрине
Суя варса, Сире хур тумăп.

33997-чв

X

Несĕлсен хĕрлĕ юнлăхĕ,
нĕрлĕ тунсăхĕ,
савнăçĕ
Вĕрилетĕр ăса та,
чуна та
юна.
Çичĕ ĕмĕр çич мăшкăлĕ,
тутăх сăнчăрĕ,
кăшăлĕ
Чăнкăртаттăр манра та,
санра та
ванса.
Сас каларттăр чăвашлăхăн
чăтнă чăнлăхĕ,
çынлăхĕ —
Вăл çĕр çийĕн çĕкленнĕ
тĕнче çӳппи
мар!
Тĕвĕлентĕр пуласлăхăн
ирĕк чĕрлĕхĕ,
пурлăхĕ —
Çын ачи çын таптанă
çул çинчи
тусан мар!

# КАЛАМ КУНЕ

## Йыхрав

Калăм кунĕ арçынсем кăмака çуламĕнче хĕртĕнеççĕ. Чаплă тумланса, хĕç çакса, ут утланса, ял тăрăх тухса каяççĕ. Пÿрте учĕсемпех кĕрсе каятчĕç.

**Халăх астăвăмĕ**

I

Килчĕ Хĕвел, хăюланчĕ,
Тĕр тĕрлесе вылять сăрт тÿпинче.
Ту çамкине ешĕл йĕрсем хурать,
Хĕлĕн тумне чĕнтĕрлесе пырать.
Хĕл капăрĕ хуралчĕ, пылчăкланчĕ.

Те тĕрепе, те чĕнтĕрпе,
Те тăрисен юррипе иленсе,
Çĕр-йышĕ тухать Çĕр-анне варĕнчен.
Хĕвелĕ çăвать хăймисем юхиччен.
Мухтанмалăх çăвать хăйĕн сар мулĕпе.

Çырмара
Çĕр-Ама
Хĕр çуратнă ятпа
Те йĕрет, те ташлать,
Тен, асапĕ иртнишĕн
Савăнса макăрать?

II

Эп,
Çĕрулми аври çинче выртса йăваланса
Хуралнăскер,
Шап-шурă юр çинче выртса йăваланса тасалтăм.

Çур Хĕвелĕпе ман икĕ шурă аллăм
Пӳрне сыпăкĕнчен,
Кашнийĕнчен,
Çĕрулми аври пек
Çеçке кăларчĕ,
Сасăлантăм:
Çакна эсир «çĕр-йышĕ юрлать» теетĕр.

III

Çурăлас папка пурпĕрех çурăлать,
Çурçĕр çилĕ тем пек ахăрсан та.
Мĕншĕн тесен халлĕхе
Хура Тур лашине
Пĕр усал та çитсе утланман-ха.

Калас тенĕ йыхрав пурпĕрех каланать,
Çăвара тăхланпа хупласан та.
Ма тесен халлĕхе
Çаврăнан Хĕвеле
Пуçтаян чăвашсем çухалман-ха.

IV

Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту çине
Чи Сарри ухать,
Чи Сарри ухать, сарăлма хушать,
Ярпайса çӳреме вăй-хăват парать.
...шур çынсен ăйрисем — шурсем айĕпе!
Ыр çынсен ăйрисем — уйсем варрипе!

V

Утланăр утăрсене!
Çитмĕл çичĕ çăлран шыв турттарăр!
Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту питне
Çуса ярăр!
Утланăр ăйăрсене!

Хӗрӗх те пӗр чултан вут кӑларӑр!
Хӗрӗх Чалӑш Хӗрлӗ Ту тӑррине
Кӑвайт хурӑр!
Хӗрӗх Чалӑш Хӗрлӗ Ту — Тӗнче Амӑшӗ,
Ватти! Вӑл сан аннӳ!
Яшши! Вӑл сан савниййӳ!
Утланӑр утсене!
Ҫӑлтӑр витӗр кайса,
Кӗмӗл хӗлӗх тупса кӗсле майлӑр!
Хӗрӗх Чалӑш Хӗрлӗ Ту сасӑлантӑр!
Сас патӑр Тӗнче Амӑшӗ!
Аннемӗр!
Савниййӗмӗр!
Ҫӗр чаваҫҫӗ Унӑн умӗнче
Шурӑмпуҫӗпе килекен кӑвак утсем.
Таканӗнчен вут тухрӗ — сиплӗхе,
Пуснӑ ҫӗртен шыв тухрӗ — чӗрлӗхе!

Утланӑр утӑрсене!
Эп каламастӑп ҫакна — Хӗвел калать,
Эп каламастӑп ҫакна — Уйӑх, Ҫӑлтӑр калать,
Чӗррӗн пурӑнма ҫуралнисем вут ыйтаҫҫӗ,
Чӗррӗн пурӑнма ҫуралнисем шыв ыйтаҫҫӗ,
Пуласлӑхра пулас тенисем юрӑ ыйтаҫҫӗ!
Хӗрӗх те пӗр ҫӑл тӗпне сик — таврӑн,
Хӗрӗх те пӗр чул аркат — таврӑн,
Ҫӑлтӑр ҫулӗпе кай та — таврӑн!
Несӗлсен шывне туп та сиплӗхпе кил,
Несӗлсен вутне туп та чӗрлӗхпе кил!
Несӗлсен юррине туп та кӗвӗпе кил!
Эпӗ мар калатӑп ҫакна — ахлатакан аннӳ калать
Эпӗ мар калатӑп ҫакна — ӳсекен ачу калать,
Эпӗ мар калатӑп ҫакна — тӑвану калать.

## ЙЫХРАВ ЯЛАВĔ

Сан халăху пĕтмен, пĕтмест.
Чунне упрать çич пĕлĕт тӳпинчи
У Ш А
(çав çăлтăра эсир Ирхи Çăлтăр теетĕр).
Уша çăлтăр сӳниччен
Юлашки чăваш ЮПИ ӳкмест, çакна ĕнен.
Уша çăлтăр ӳкиччен
Чунсен тасалăхĕ ӳкмест, ĕнен.
Кăмака çамки çине çурта çут та:
— Уша — çӳлте! — те.
Çавра çăкăр çине сар çурта ларт та:
— Уша — çӳлте! — те.
Кил çуртине мал енне ларт та:
— Уша — çӳлте! — те.
Кăмрăк пулăн та — çĕрте çĕрмĕн,
Хăмла пулăн та — шывра путмăн,
Хĕрлĕ тăма выртăн — вутра çунмăн,
Чĕкеç пулăн та — Турра çывăх чун пулăн.
Уша çӳлте! Сӳнмест.
Сан халăху пĕтмест.
Уша палăриччен кăмака çулăмне тăр.
Çулăмĕнчен пĕр сăмах çеç ыйт:
— Пулсам эс, çулăм, пирĕн ялавăмăр!
Çулăмпа тасал та Уша умне тăр,
Уша çăлтăртан пĕр сăмах ыйт:
— Пулсам эс, Уша, пирĕн ялавăмăр.
Хĕвел хĕрелсе тухиччен,
Тĕнче юрласа яриччен
Сан аллăнта пулĕ вăл — Қалăм ялавĕ.
Çав ялав Хĕвеле хирĕç тухма, ун умне тайăлма.
Пуç тайма хатĕр халăх ялавĕ.

## КАЛАМ ЯЛАВЕН ÇЫРАВЕ

Асаттесен аслашшĕсем пытарнă ялава
Шыраса тул. Çĕкле!

Пĕтĕм саспа вула унта
мĕн
çырнине:
«Çич ют хĕççи кассан чăвашăн тăхăмне,
Хĕвел, Уша та Вут туптать чăвашăн хĕççине».
Вула! Вула! Куçу хĕрсе çитсен,
Сив пăр çине выртса
тата,
тата вула!
Хуп-хура каçăн кунĕнче
Сарă хир еннелле куçна яр та —
Вула Хĕвел мĕн çырнине:
«Ырăпа çеç тĕнче тăнăç тăрĕ,
Усалли — усалĕпех пăчланĕ».
Иртнĕ кунсен ячĕпе вула,
Килес кунсен ячĕпе вула.
Анлан.
Хĕвел тухиччен Калăм ялавĕ çĕкленсен,
Çав ялавпа кашни пўрте кĕрсен,
Тупăнать те туптанать çав Сăмах,
Хĕç-Сăмах,
Вут-Сăмах!
Чун-Сăмах — Чăн Сăмах!
Çавăнпа Хĕвел тухиччен çывăрма юрамасть.

## ÇУМАР ЧӲКĔ

Хаяр курайманлăх çухалтăр,
Юрату юррисем, ай, çуралччăр,
Типсе çитнĕ Çĕр Ама кăкăрне

Тулса ҫитнӗ ҫӳлти Ҫут Кӳлтен
Аҫа шывӗ ҫуса канлӗх патӑр.
Хӑймалантӑр ҫӗршыв, хӑймалантӑр,
Хӑймаланса патӑр пире ырлӑхне.
Ыйтатпӑр!

* * *

Хура каҫ тыткӑнне пӗр лексен,
Тутансан ҫӗрнӗ каҫ шӑршине,
Хӑтӑлаймӑн унтан, чӗртмесен,
Ҫутмасан юрату ҫуртине.

Ҫӗрнӗ каҫӑн суя ҫутисем,
Ҫӑлтӑрне сутса янӑ тӳпе!
Урана тӑллакан ҫӗленсем
Шӑхӑраҫҫӗ сана витлесе.

Ҫук пек ҫӑлӑнӑҫ пӗр ҫаклансан,
Пӗр ӳксен ҫак ҫӗлен шурлӑхне.
Эй, юратӑвӑм, ҫун хытӑрах!
Ҫунтарсам ҫӗрнӗ каҫ нишлӗхне!

* * *

Шур хут пекех чӗтрет ман ӳтӗм,
Юнра тапать сӑвӑ таппи.
Хӗвел те Уйӑх пайӑркиллӗн
Шалта ҫиҫет тӗнче ҫути.

Ҫакӑ тӗнчен пӗчӗк утравӗ —
Сӗтелӗм — кун умне тухать,
Хаяр хумсен кӑра лӑпкавӗ
Ун кӗтесне ҫӑвать, хӑйрать.

Утравăм ерипен çĕкленчĕ,
Сулайрĕ сăввăм çунатне,
Хĕвел тĕррилле, каç хурилле
Сăмахăм ӳкрĕ çул çине.

## ХЕВЕЛ АЧИСЕНЕ

Пĕр вĕçсĕр сăвă çырса тăрăр,
Ан пултăр вĕçĕ чун тенин.
Шут вĕçленсен те, сăвă юхтăр
Çырмари шыв пек шăнкăртин.
Тĕлĕксенче çавăрса илĕр
Тĕнче таппин хусканăвне,
Шур хут уйне Сăмахăр хутăр
Чăваш чапне те асапне.

* * *

Канма ларатăп, курăкран ыйтатăп:
— Çак пурăнăç тени
Мĕскер тени?
Çул курăкĕ аран пуçне çĕклерĕ,
Ним калаймарĕ сарăхнă тути.

Юман тĕлне çитетĕп, тайăлатăп:
— Çак пурăнăç тути
Мĕскер тути?
Юман пуçне сулса шавласа кайрĕ,
Теме юнарĕ кукăр туратти.

Хурнуй хĕрне тĕл пултăм, пуçа сĕлтрĕм,
— Çак çул ăçта каять?

Аçта çити?
Хĕр пуçне тайрĕ, лăпкăн хуравларĕ:
— Ишĕлекен кĕпер тĕлне çити.

## ПУЛАСЛАХ

Кӳлли тарăн,
Шывĕ тăрă,
Акăшсем ишеççĕ теççĕ.
— Эп пулман унта, пĕлместĕп.
Шывĕ пыл пек,
Сывлăш çу пек,
Пурнăç пыл та çу тееççĕ.
— Эп пулман унта, пĕлместĕп.

* * *

Аннемĕр килĕнчи шăрчăк сасси
Таçта çитсен те хамăрпа пĕрле:
Мускав е Петербург хваттерĕнче
Çывратпăр —
Шăрчăк пирĕнпе.
Сасартăк шăплăх хапхине
Уçса кĕрет те юрлама пуçлать,
Чун варринчи уçланкăра
Тăван тавралăх илемне сарать.
Чуну канать, ӳтӳ сывлать,
Хĕвеллĕ каç куçне уçать,
Сар кун çĕршывĕн пуссинче
Пĕрремĕш савнăçу чупать.
Шăрчăк юрлать,
Шăрчăк юрлать — Хăлха асилĕвĕ янрать.
Çук, манăçмасть пĕрре илтни,
Ачалăх тĕнчинчен килни,
Тăманлă каçсенчи,

Краççын çутиллĕ ăшă пӳртсенчи
Шурă Хĕртсуртăн кăмăллă юрри.
Шăрчăк юрлать, сана сыхлать.
Пĕтместĕн эсĕ, хăлхунтан
Çав сасă çухалман пулсан.
Кашни каçах, тавралăх лăплансан,
Хĕртсурт юрри чĕрӳ варне выртсан.

## ÇИМĔК КАÇĔ

I

Хула варрине тухатăп,
Хула варринче кăвайт хуратăп,
Шупашкар каçне Хĕвел çутса паратăп —
Кайнисен ячĕпе,
Çутта кусна чунсен ячĕпе.
Савăннă-кулнă — вăрçăпа пĕтнĕ,
Савăннă-кулнă — кĕрешсе ӳкнĕ
Кунсен, самантсен, тапхăрсен хушшине
Халăх пурнăçĕ тетĕп.
Çăлтăр витĕр курăнакан çулпа кайнисем,
Таврăнăр,
Уйăх витĕр курăнакан уйра ĕçлекенсем,
Таврăнăр,
Хĕвел витĕр курăнакан хĕрпе пĕрлешнисем,
Таврăнăр!
Эп хунă кăвайт тавралла пуçтарăнса,
Эпир сăмахпа та ăс-тăнпа выляни́не курса
Тăрăр!
Куратăр-и, сукăрланнă эпир,
Сăмах çӳппи сапмалла выляса,
Пĕр-пĕрин куçне çав çӳпĕпе шăтарнă,
Куратăр-и, чĕлхесĕрленнĕ эпир,
Суя та ют ăс-тăн картинче выляса,
Чĕлхесĕре юлтăмăр эпир.

II

Ĕненнĕ пек шухăшлама,
Ĕненнĕ пек сăмах тытма,
Ĕненнĕ пек ĕçе тума
Чăваш мансан — чăвашлăх пĕтĕ
Тесе эсир тахçан каланă.

Ĕненнĕ пек шухăшламан,
Ĕненнĕ пек сăмах тытман,
Ĕненнĕ пек ĕçне туман!
Çавна пула ик ӳпкерен пĕри çĕрет,
Ик чăвашран пĕри пĕтет.

Ĕненнĕ пек шухăшласан,
Шухăша май сăмах тупсан,
Сăмаха май ĕçне тусан,
Вут чĕлхепе вута чаран,
Хавшанине хăват паран,
Шăплан, чĕлхӳ Вут чĕлхине мансан.

III

Йыхраççĕ сире, сас яраççĕ, чĕнеççĕ
Çăлтăр витĕр çул тăрăх килнисен ачисем,
Ырни иртсе кайĕ, тĕп пулĕ кив хурлăх
Ăшра пиçнĕ сасă кĕвве куçнăçем.

Йыхраççĕ сире, сас яраççĕ, чĕнеççĕ
Уйăх витĕр уйра ĕçлекен ачисем,
Çĕн юрă кивелĕ, кив юрă çĕнелĕ
Тухсан çак вăййа чăн чăваш ачисем.

Йыхраççĕ сире, сас яраççĕ, чĕнеççĕ
Хĕвел витĕр хĕрсен-арăмсен ачисем
Тĕнче пек çавра-и, çавра пирĕн юрă,
Хĕвел пек çавра-и вĕсен вучĕсем?

Пуҫтаранăр, килĕр, сăртсем урлă каҫăр,
Ҫӳлти сӳниччен ҫĕрти сӳнмĕ нихҫан,
Ҫич ĕмĕр ахлатнă астăвăм хăпартăр,
Пурри сасăлантăр хăйса паянтан.

Этем ĕмĕр чĕрĕ — ватта манмасассăн,
Юрри те ҫухалмĕ ăсне сутмасан,
Ҫӳлти шевлесен пире пулĕ сăвапĕ,
Чăваш ырăпа усала уясан.

Йыхратпăр сире, сас яратпăр, чĕнетпĕр
Этем тĕнчине ҫын илемĕ кӳме,
Йыхратпăр сире, сас яратпăр, чĕнетпĕр
Тĕнче усалне тĕнчерен пистерме.

IV

Янрать, янрать ҫу каҫĕ,
Кĕвви инҫе вĕҫет.
Асамĕ те ачашĕ
Чуна пырса тивет.

Чĕрĕлнисем юрлаҫҫĕ,
Юрлаҫҫĕ чĕррисем,
Ах, Ҫимĕкĕн вут куҫлă
Чечен юмахĕсем!

Мăшăр ӳпкем тулличчĕ
Тĕлленнĕ тĕлĕксем,
Сăввăмпала саланчĕҫ
Ҫак сывлăшра вĕсем.

Тен, эп те тĕлĕк пулăп,
Тĕнчемĕр ӳпкинче
Кĕҫех, тен, сапаланăп
Тĕнче сывлăшĕнче.

Ах, Çимĕкĕн вут куçлă
Чечен юмахĕсем,
Çын ăшĕнчи ыр вут пек
Çунаççĕ-çке вĕсем.

V

**Çимĕке хутшăнманнисен юрри**

Чĕрем ыратнине
Хурăн çулçи çине çырса хураймăп,
Эп маннă калаçма шур хурăнпа —
Çухатнă аппана.

Пуçăм ыратнине
Юман çулçи çине çырса хураймăп,
Уй варринчи мăн улăп сассăр,
Аттеçĕм кайнă, çук.

Çăка çулçи çинче
Аннеçĕм чĕлхипе сăмах вулаймăп,
Хула çăки çўçне кастарнă,
Çырăвĕ пĕтнĕ, çук.

Эп хам,
Хулан чĕлхесĕр янаварĕ,
Хутпа та кĕнеке пăтравĕнче
Çўл тўпери шевле сăнне шыратăп,
Анчах та ун сăмахĕ
Çăка çырăвĕнче.

VI

Çĕршывăмçăм!
Мана анне сана пилленĕ.
Арçку çине лартмарăн, вылятмарăн.
Çапах та кун çитсен,

Юратăвăн вĕри кăвайтĕнчен
Шăранса тухнă юн тумламĕнчен
Кун курнă пепкеме санах пиллерĕм.
Çĕршывăмçăм, юрат ман пепкеме,
Эп курнă мăшкăла ан куртăр ĕмĕрне.

* * *

Тем пек эп юрлăттăм саркайăксем çинчен,
Уйри утмăлтурат çеçке сарни çинчен,
Хула урамĕ ман чуна та
Тĕрлĕ тĕспе савăнтарни çинчен...
...анчах та каçсерен,
суя чансен кĕрлевĕ лăплансан,
аллăм туса пĕтереймен ĕçсем,
кун ăшăтма ĕлкĕреймен сăнсем,
вак-тĕвексен çĕççи вакланă шухăшсем
шур хут ани çине килсе
кун кăтартма ыйтаççĕ...
Суя чансен кĕрлевĕнче те ырлăх пур тесе
Тем пек эп çырăттăм,
Анчах шевле вылять, каçхи хĕвел тухать.

* * *

Ахрат çырминчен çĕкленнĕ хура чул пек,
Ĕмĕрлĕхе сӳнен чун ыратăвĕ пек,
Тавралăха тулса-тулса килет, чуна кĕрет
КАÇ!

...хĕвелĕм,
пахчари кайăксене илсе кайрăн,
тин çеç çеçкеленнĕ утмăлтурата,
тин çеç куç уçнă хула урамĕсене
тĕссĕрлетсе хăвартăн,

хула лаппинче вăй вылякан ачасене
ăçта хупса хутăн эсĕ,
хĕвелĕм?..

Ах, кайрăн эсĕ,
Хĕвелĕмĕр,
Йӳле пилĕкĕн хăвăн умна тăнă ачусене хăварса.
Ачусен хĕвĕнче выртаççĕ тумалли ĕçсем,
Хут çине ӳкме хăйман сасăсем.
Ачусем тавра тĕнче ырлăхне ĕненме пăрахнă çынсем
...суккăрланнă куçсенĕн куçне тасатмалăх
сан тăлăх ачусем сăвă çыраççĕ,
каç çырнинчен кăвайт хураççĕ —
Сана шыраççĕ.

* * *

Шурă юр ăшшине, ун таса чĕнĕвне
Эп ĕнер
юр шурри хуралсан
Туйса илтĕм.

Хура каç ырлăхне, унăн йăл çутине
Эп ĕнер
кун куçне шур карсан
Туйса илтĕм.

Тӳпери ятсене, çăлтăрсен сассине
Эп ĕнер
çĕр çинчи сăмахсем çӳпленсен
Туйса илтĕм.

* * *

Айван пулин те — мĕскĕнçĕ пулман,
Мĕскĕнсемле çын нушинчен кулман,
Мĕскĕнленсе хама усал туман,
Мĕскĕн сутса, çĕн кĕрĕк тăхăнман.

Ялти пекех, эп халĕ те айван,
Эп халĕ те ачапала пĕр тан.
Ача пекех вылятăп паттăрла,
Ултав айне тăвасшăн мар чуна.

Чуна та чĕлхеме! Ун хăватне!
Айванлăхăм упрарĕ чăннине.
Çулне çухатнă вăйлă мĕскĕнсем
Ӳкеççĕ чап умне. Тараççĕ мĕскĕнсем.

Вăхăт хушмасть тăма пуçа пĕксе,
Айвансене чĕнет кĕрешĕве.
Кăвар та вут тăкать ун урапи,
Чуппийĕнчен пăрнаймĕ çын шăпи.

Айвансене савать тĕнче çути,
Айвансене ăшăтать тĕнче ăшши,
Чи лайăх сăвă — чи айван чунран,
Чи лайăх шухăш — чи айван ăсран.

* * *

Сасне çухатнă чĕмсĕр пахчана
Кун çĕççипе вакланă чĕрине
Ывăс çине хурса,
Пуласлăхпа калаçакан тухать.
Сывлăм тумламĕ суранне çăвать.

* * *

Айванăм, тусăм!
Лăштăр кăтра пуçа
Кăвакартан кунсем
Пурришĕн ан кулян.
Эпир çаврас тени пек
Тĕнчийĕ çаврăнсан,
Пĕр кăвак пуçлă çын та пулмĕччĕ паян.

* * *

Аннене, Хĕвеле,
Тĕнчене тав тăватăп.
Кашникунлăх! Санрах
Çĕннине эп шыратăп:

çуралас сассене чĕлхемпе ачашлатăп,
палăрас сăнсене сăввăмра саламлатăп.
Хĕрĕх хĕлĕхлĕ çил янăрать — илтетре?
Хĕрĕх питлĕ хĕвел улăхать — куратра?

Аннене, Хĕвеле,
Тĕнчене тав тăватăп.
Кашникунлăх! Санрах
Чăннине эп тупатăп:

Çын вилмен-ха, пĕтмен. Пусăра шыв типмен.
Пур шевле ту çинче. Чăваша тăм тивмен.
Пур кун-çулăн таппи, çиес çăкăр пĕтмен.
Пур пуласлăх çути: таврăнас кун вилмен.

Аннене, Хĕвеле,
Тĕнчене тав тăватăп.
Кашникунлăх! Сана
Çĕççӳне тавăратăп.

* * *

Кĕркуннехи хире пăхса илсен,
Тĕнче вилсе куç хупнăн туйăнать.
Çамка лаппи çинче
Çак хура кĕр иртсен,
Шап-шурă юр çинчи пек
Йĕр юлать.

* * *

Халь тин çунă шур юр çутипе
йывăçсем лайăхрах
палăраççĕ.
Уткесем лайăхрах усăлаççĕ
халь тин çунă шур юр
ăшшипе.
Пĕлĕтре-и утатăн, урамра-и?
Емĕрхи сĕрĕмсем пуçран тухнăн,
ĕмĕрхи сурансем чунра
сÿннĕн,
Курăнман хĕвеле хĕвс чикнĕн, пытарнăн
Хĕр вылять, яш кулать.
Шупашкар урамне туй çутатнăн
Куллисен сар шевли инçене сарăлать.
Енер çеç урамра хĕвĕшен этемсен
шухăшне усайманшăн
Хама хам ятласа та вăрçса,
пурнăçра та çынна
пĕлейместĕн тесе
хурласа йăлт пĕтертĕм.
Ак паян шурă юрăн çути,
урамра янăран усă куллăн
сар шевлипе хутшăнса,
Шухăшсен те чунсен, сăмахсен хурине йăлт тасатрĕ.
Хулана пĕр çур кунлăх тасалăх парса савăнтарчĕ.

Савнăç кӳчĕ.
Суранне сыватас текенни,
Хурлăхне вĕçтерес текенни
Çакă юр ытамне йăванса ырлăх тупрĕ.
Телейне тĕл пулма Пӳлĕх пӳрнĕ этем
Туррăн ыр саламне ăшне илчĕ.

## ШУПАШКАР КАÇĔ

Шăв-шав лăплансан,
Ялхуçалăх институчĕ тăрринчи шур сехет
шăп вуниккĕ çапсан,
Хулпуççийĕм çине йăтайми кун çĕклемĕ тиенчĕ,
Пӳлĕх пӳрнĕ кун-çул картинче
Тата тепĕр кун çунса пĕтрĕ, вĕçленчĕ.
Вĕçленчĕ çирĕммĕш ĕмĕр вĕçĕнчи путсĕр кун.
Ырăсен таса сăрчĕ çинче Усалсем ташланă,
тапăртатнă кун.
Турăçăм!
Пире пӳрнĕ йывăрсене
Эс çĕкле!

* * *

Кунсем хуралчĕç е сӳнчĕ юрату
Çак Шупашкарăн тертлĕ ункинче?
Чĕре уçланкинчен пур вăйă-кулă тарчĕ.
Чун авăнать пĕчченлĕх кукринче,
Тĕл-тĕл çунать сӳнес темен, пурнас текен хăватăм,
Кĕтет пĕр ыр сăмах,
Пĕр ырă сасă,
Пĕр чун сасси, чун сывлăшĕ пулинччĕ
Çĕкленме.

* * *

Хĕвелĕм!
Хушшăмăрта
Хура çăхан явнать:
кун суккăрланнă.
Ăçта
кун куçĕ?

## ПУХУРА ЛАРАКАНСЕНЕ

Эсир — пĕрремĕшсем,
Пĕрремĕш ретрисем.
Эп — хĕрĕхре те,
Хĕрĕхмĕш ретре,
Ан çаврăнса пăхсамăр ман енне.
Эп хĕрĕхмĕш поэт,
Манран сăмах пĕтет.
Юлать пĕр ĕç тени
Тата çак Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту тени.

Сире Парнас кĕтет.
Мана АННЕ чĕнет.
Ан çаврăнса пăхсамăр ман енне —
Çухалĕ вырăнăр пĕр йышăннă ретре.
Эсир тарларăр мул та сум кĕтсе,
Ман тарăм — Калăм юнĕ те кĕсле.
Чĕрес ман аллăмра, мĕскер-ши пур унта?
Анне куççулĕ мар-ши, тупата!
Чĕресĕмрен шăварăп Ту çинчи
Чулланнă йăмрасен çĕрне те тымарне.

Çак Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту çинче
Ахлатакан АННЕМĔР сассинче
«Пĕтме ан пар!» — тенийĕ илтĕнет,

«Хăвна ан сут!» — тенийĕ тĕлкĕшет.
АННЕМЕР ĕмĕр Хĕрлĕ Ту çинче,
Ун юнĕпе хĕрелнĕ тăвайкки,
Хурлăхĕпе шуралнă ту хӳри,
Куççулĕпе тасалнă ту çамки.

Куççулĕнчен çут хĕлĕхсем явсан,
Хурлăхлă кăкăра ăна карсан,
Тытнă кĕсле юнпа тăварлансан,
Каланисем сăваплă вут хурсан —
Чĕм кĕмĕ-ши илтен АННЕ ӳтне,
Курмăпăр-ши Çĕршыв чĕрĕлнине?

Кулатăр-и, пĕрремĕш ретрисем?
Парнас çинче паха ларакансем?
Илтместĕр-и, Ту ахлатать, чĕнет:
«Эп ишĕлсен, ачам, тĕнче пĕтет!»

## ЧЕРЕ ВИЛЕ ÇИНЧЕ

Аслă пичче черкке ĕçет,
Пĕр тумлампа мана сийлет.
Пĕчĕк пичче чĕрне касать,
Каснисене хĕве хурать.
— Эй, пиччесем, эпĕ вилмен,
Чуна тухма вăхăт çитмен!
Аннем, ан тат çĕлен çипне,
Аттем, ан ту шур тупăкне!
Тăванăмсем — куç çутисем,
Манăн пурнас кунсем пĕтмен,
Кунта çиес çăкăр типмен!
Никам илтмест — йăмăк илтет,
Çĕлен çиппе кĕпе çĕлет,
Тутам çине сар çу сĕрет.

* * *

Туртас темен çěртен
Туртайнă лавăм пур,
Çўрес темен çěртен
Çўреněйěрěм пур,
Калас темен çěртен
Каланă сăввăм пур:
Сăв варринче хальччен
Упраннă чунăм пур.

## ШУПАШКАРПА СЫВПУЛЛАШНИ

Шупашкар! Савнă сар Шупашкарăм!
Сан ачу, сан чěппў инçете çул тытать:
çунатне вăй хушсам, çул çине пил парсам.
Шупашкар! Савнă сар Шупашкарăм.
Пыл шăршиллě ачаш ураму!
Чуна канлěх тăкса, çутă ырлăх сапса,
çăлтăру тўпене хăпарать.
Шупашкарăм!
Савнă сар Шупашкарăм!
Саншăн çеç ăнтăлса, Çеçпěл пек кěлленсе
эп çўрем.
Сан ятна, сан ятна пăшăлтаттăр тутам:
Шупашкар!
Сывă пул, Шупашкар!
Каялла килмесен ан шыра çěр çинче,
шыв çинче ан шыра! Çăлтăр пулăп,
сан çинчи тўпере эпě çунăп.

...ачаш варкăш пулса, çуркунне килсе кěрěп; чăн хуркайăк пулса, сан çинчи хурлăха эпě сирěп; кěр çуначě çине тиесе, хурлăхна тинěсе кайса леçěп; хěл е çу кунěнче, сан çинчи чěр хěвелěн куçне шур илсен, çав тискерлěх-синкерлěх вăйне çěнтерме çăлтăр ушкăнěнчен хăват тупăп та ки-

лĕп. Сывă пул!..
Шупашкарăм! Савнă сар Шупашкарăм!
Эп юта сутăнсан, ывăлна тункăссем хушшинче
эс шыра,
Таракан-хăнкăла хушшинче шыраса та тупса
лапчăтсам эс мана.
Калăм кунĕ çитсен — çунтарсам эс мана!
Шупашкар!

Пехилле! Сăмаху кăвакарнă çăкăр таткийĕ пулминччĕ, ман хĕрўлĕхĕм ют такан айĕнчи шывсăр типнĕ тăпра муклашки пек тĕпренсе Çўлти шевлесен хăватне юрăхсăр тусан çеç пулминччĕ.

Шупашкар!
Каялла таврăнма хăват пар!

* * *

Кам пĕлет, ăçталла илсе кайĕç пире çул-йĕрсем?
Иртерех пуль ютри картара
Кунсерен каçхи кайăк пулма,
Мăйсăр уйăх çине çут куççуль
Шăрçине ярăм-ярăм çакма?
Тарăхуллă каçсем!
Тарăхуллă кунсем!
Куç тулли — тăкăнас вутлă хĕм кўллисем.
Мĕншĕн чи вăйсăрри çĕкленесшĕн?
Шухăшсем кун курмасăр кĕл пулса çуннине
пĕтересшĕн?
Мăшкăл мар-и сас пама хăяйман шухăшсен çутине?
Кулăш мар-и мăшкăлпа витĕнсе пыр çиен чунсене?
Мăшкăл та, кулăш та!
Вăйсăрри хăйне хупнă карта алăкне ишмесен,
Мăшкăл та, кулăш та!
Çиçнĕ шухăш тĕнче хурине сирмесен,
Çавăнпа уйăх мар, çут куççуль шăрçи мар,
Ах-ахлатнă кунсен те каçсен шевлисем
Тўпере!